## А. Николаев летчик-космонавт çуралнăранпа – 80 çул



# «Уçлăха вĕçесси – арçын ĕçĕ»

СССР летчик-космонавчĕ, икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ, авиаци генерал-майорĕ... Андриян Григорьевич Николаевăн пĕрремĕш старчĕ «Восток – 3» карап çинче 1962 çулхи август уйăхĕнче пулнă. Иккĕмĕшĕ – 1970 çулта «Союз – 9» çинче. Пĕрремĕшĕнче вăл уçлăхра тăватă талăк ирттернĕ, иккĕмĕшĕнче – 18.

Ĕçтешĕсем палăртнă тăрăх, питĕ лăпкă та тĕплĕ шутлакан çын. Шăпах çаплисенчен пулать те космонавт. Юрий Гагаринпа Герман Титов та хăйсен калавĕсенче ун пирки часчасах асăннă. «Восток – 3» вĕçевĕ хыççăн вара космонавтсем ушкăнпа уçлăха нумай талăклăх вĕçме пуçланă.

Андриян Григорьевичăн пурнăçĕнче те улшăнусем нумай пулса иртнĕ. Вăл Н. Жуковский ячĕллĕ Сывлăш-çар академийĕнчен вĕренсе тухать, ăна Раççей Федерацийĕн Аслă Канашĕн депутачĕ пулма суйлаççĕ. Хăйĕн ĕçĕ çинчен, космонавтсен пурнăçĕ пирки каласа вăл тĕнчипех çаврăннă темелле. Чап вара ăна япăх енне улăштарман. Малтанхи пекех ырă та сăпайлă, çирĕп те хастар пулнă. Уçлăха вĕçессине те вăл арçын ĕçĕ тесе палăртнă.

Сумлă та паллă ентеш çуралнăранпа вара 80 çул та çитрĕ. Çавна халалласа районта тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче вара пирĕн район делегацийĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнчи савăнăçлă уяв каçĕнче пулчĕ. 2008-2009 вĕренӳ çулĕнчи кăтартусемпе Юнкă шкулĕнчи çамрăк космонавтсем те унта хутшăнма тивĕçнĕ.

**Хамăр инф.**

## Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх тата ачасем

# Рейдра – çамрăк инспекторсем

Трасса çинче машинăсем пĕрин хыççăн тепри вĕлтлетсе иртеççĕ: пĕчĕккисем те, пысăккисем те... Тĕрлĕрен: хурисем, шуррисем... Хăвăртлăхĕсем те питĕ пысăк... Акă çул варринчех васкавлă пулăшу машини курăнать. Çынсем аварие пула инкек тӳснисем çине куç илмесĕр пăхаççĕ: икĕ ача çул урлă каçса çитеймен. Пурнăçне пурăнса та курайман: ашшĕ-амăшĕ киле канфет илсе килни те пысăк савăнăç пулнă вĕсемшĕн. Халĕ вара пĕри больницăра, тепри куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупнă. Пысăк хăвăртлăха пула. Асăрханма пĕлменнине пула та...

Çакнашкал ӳкерчĕке çул çинче курма нумайăшĕн лекнĕ пулĕ. Машинăсем çулсем тăрăх кăткăсем евĕрех чупаççĕ, çуран çӳрекенсем вара час-часах тимлĕхе çухатаççĕ.

Иртнĕ шăмат кун вара ирхи 7 сехет çурăра Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсемпе пĕрле çул çине тухрĕç. Çул-йĕр çинчи инкек-синкексене асăрхаттарас тĕллевпе.

1983 çултанпах шкулти çамрăк инспекторсен юхăмне Герман Ананьевич Малыгин преподаватель-психолог ертсе пырать. Ачасен çак тапхăрти çитĕнĕвĕсем çинчен асăннипе пĕрлех вăл çак юхăмăн усси пысăк пулнине калать. Пурнăçра кирли яланах интереслĕ, пĕлĕве те анлăлатмах ыйтать. Ачасем çул-йĕр правилисене вĕреннипе çеç çырлахмаççĕ-çке, пĕрремĕш пулăшу пама, ытти тĕрлĕ хăрушсăрлăх правилисене те ăса хывса пыраççĕ. 5-7-мĕш классенчи çамрăк инспекторсен командисем пĕлӳ шайне тĕрĕслессипе пĕр-пĕринпе тăтăшах ăмăртаççĕ. Çакăнтанах районпа республика шайне тухасси пуçланать.



Çул-йĕр çинчи тимлĕхе ачаранах вĕрентсе пымалла. Раççейĕпе çулталăкне икĕ пин ытла ача аварисенче вилет. Чăн вăрçă çулĕсем тейĕн. Халĕ тата шкула ачасем автобуспа çӳреççĕ. Ку та правилăсене пĕлмеллине ыйтать. Ачасене автобуспа турттарасси те питĕ ответлă ĕç.

Çакна тĕпе хурса тата «Асăрханăр – ачасем!» операцие шута илсе Муркашри вăтам шкулта тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ: викторинăсем те, класс сехечĕсем те... Шăмат кунхи рейд та профилактика енĕн пысăк ĕçĕ пулчĕ.

Инкексем ан пулччăр çеç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Пĕрле кичем мар

# «Çаклан, пулă, пысăкки те пĕчĕкки»

Иртнĕ эрнере Муркаш ялĕнче пурăнакан пенсионерсемпе инвалидсем хăйсен ялĕ çывăхĕнчи пĕве çыранĕнче пуçтарăнчĕç. Пуху тавраш ирттерме мар – ăмăртса пулă тытма. Ку мероприятие ирттерес тесе районти хӳтлĕх пайĕ, «Муркашри социаллă пулăшу паракан центр» тата районти инвалидсен обществи тăрăшрĕç.

Çак интереслĕ ăмăртăва вĕсем икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ А.Г. Николаев летчик-космонавт çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă. Андриян Григорьевич ача чух питĕ пулă тытма юратнă, ялан тенĕ пекех пулла çӳренĕ. Вăхăтра нумай ачашăн кумир пулнă космонавта килĕштермен çын çук та пулĕ.





Андриян Григорьевич пурнăçĕнчи интереслĕ самантсем çинчен районти хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Нина Пантелеевна Петрова каласа пачĕ. Унтан вара пулăçсем хăйсен вăлтисене пĕвене пăрахрĕç. Кашни пулăç хăйне кăмăла каякан вырăн тупрĕ. Ăмăртмаллипех ăмăртрĕç вĕсем. «Чи ăслă пулăç» ята А. Анисимова пенсионерка тивĕçрĕ. Пулăсем çинчен интереслĕ те нумайрах каласа паракан 2 ушкăн инваличĕ Ю. Щегольков пулчĕ. А. Захарова вара пуринчен нумай пулă тытма пултарчĕ – 2,7 килограмм.

Ватăсем парнесемпе дипломсемсĕр юлмарĕç. Пĕрле пулса техĕмлĕ пулă яшкине те, çатма çинче ăшаланă пулăна та кăмăлласах çирĕç.

**Хамăр инф.**

## Сывлăх

# Гемоглобин ӳстерме

Гемоглобин пĕчĕк пулнине эпир больницăра юн анализĕ парса пĕлетпĕр. Апла пулсан организмра тимĕр çитмест.

Гемоглобина хăпартас тесен хĕрлĕ тĕслĕ апатсем, çимĕçсем çимелле. Авăртнă хура тулă кĕрпипе сĕт, хăймапа пĕçернĕ шурă кăмпа, гранат тата апельсин, мандарин, томат соусĕпе пĕвер, пулă вăлчипе (хĕрли) хура çăкăр, грек мăйăрĕпе пĕçернĕ хĕрлĕ кăшман, аш-какайпа, фасольпе тата кишĕрпе пĕçернĕ рагу рационта пулни питĕ аван.

Тимĕр пур препаратсене вара белоклă апат-çимĕçпе çимелле (çăмарта, аш-какай, сĕт, вăлча). Çапла тусан организм тимĕре аван йышăнать. Пĕр вăхăтрах С витамин (аскорбинка) е тата шиповник, хура хурлăхан çырлисем, цитрус çимĕçĕсене çимелле.

## Редакци почтинчен

### Тĕп пултăр!

Вăрçă! Ăçтан эс тухатăн мирлĕ пурнăçра?!
Мĕншĕн эс тататăн çынсен пурнăçне?
Çут çанталăк пулăмĕ мар эс Çĕр çинче.
Этем! Мĕншĕн тăватăн вăрçа халăхсем хушшинче?!
Уяр. Кăн-кăвак тӳпе, шурă пĕлĕтсем, хĕвел.
Савăнăç чунра, куçра та илем.
Сасартăк аçа-çиçĕм, хура пĕлĕтсем,
Шалкăм çумăр, кĕмсĕр-кĕмсĕр, тарса çеç пултар.
Лăпкă пурнăç. Ĕçле те вĕрен, юрат.
Хаваслă яш-кĕрĕм, ĕçĕ те кал-кал.
Кĕтмен çĕртен вăрçă, вилĕм те асап.
Ан пултăрччĕ вăрçă! Тĕп пултăр террор!

**Л. РОМАНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ, Шупуç.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.
Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 22-40.**

**Продаем солому в тюках. Ячмень. Доставка.
Тел.: 8-927-992-05-19. 3-3.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:120501:53, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Верхний Томлай, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:120501, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:080402:157, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Чаганары, для огородничества, площадью 710 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участник долевой собственности Ермолаев Лев Гурьевич, 16.03.1965 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Университетская, д. 2/1, кв. 268, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Кадикасинское, на территории землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:072501, площадью 1,42 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.**

**2. Ермолаеву Льву Гурьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Университетская, д. 2/1, кв. 268.**

**Участница долевой собственности Корпусова Тамара Петровна, 21.01.1973 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хыркасы, ул. Центральная, д. 9, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования СХПК «Волга», участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:031001 площадью 1,34 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Корпусовой Тамаре Петровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хыркасы, ул. Центральная, д. 9.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:966, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:956, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6010 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Продается автомобиль ВАЗ-2108 1992 года выпуска, цвет красный, в хорошем состоянии, на ходу. Цена договорная. Тел.: 8-905-341-41-92.**

**Ăратлă Зааненски качака таки усратăп. Виçĕ çулта. Кăмăн чуптарма кăмăл пур, хапăл тусах кĕтетĕп. Хорнуй ялĕ. Тел.: 8-909-305-56-21.**

**Продается автомобиль Москвич-2141 1991 года выпуска, цвет красный, двигатель ВАЗ-2106, литые диски, с документами, на з/ч. Тел.: 8-903-345-03-80.**

**12 сентября с 9-00 до 18-00 часов в ДК Большой Сундырь состоится распродажа зимней обуви. Любая пара – 600 рублей. В продаже комплекты постельного белья.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера, столы, скамейки банные. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.**

**В КАФЕ ООО «ЗАРЯ» ТРЕБУЕТСЯ ОФИЦИАНТКА. Тел.: 8-903-066-20-73.**



Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

За главного редактора В.Л. Шапошников.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 08.09.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.